* * *

Хаклă Николай пичче!

Типĕтнĕ панулми пирки чылай хушă пĕлтерейменшĕн каçарсам мана. Вĕсене ку тарана çитсе те илеймерĕм-ха. Мĕншĕн тесен çав вăхăтра ыраш çăкри пĕр кĕрепенкке чухлĕ те пулмарĕ манăн. Çапла хĕл каçипех пурăнкаларăм. Эпĕ пурпĕрех ĕненĕве çухатмарăм /сурăха та пулин/, тыррă тупса илме ниепле те май килмерĕ, эпир ытларах çĕр улми тата симĕс сĕлĕ çисе пурăнтăмăр.

Хальхи вăхăтра çăкăрлă пултăм та, çу уйăхĕн 2-мĕшĕнче Буров патне кайса килтĕм. Панулми тĕрĕс-тĕкелех. Буров нумайччен кĕтни, панулмине вăхăтра татса пуçтарманни çинчен пĕлтерчĕ. Икĕ пăт чухлĕ юлнă, тет вăл. Ахăртнех, ун чухлĕ те çук пулĕ. Çавăнпа халĕ мĕн тумаллине пĕлместĕп.

Çăкăр хаклă. Панулми ытлашши хаклах мар. Воротынец пасарĕнче нумай сутаççĕ, тырăран та йӳнĕрех. Валерьян Яснитский телеграмма ячĕ. Тен, каялла килмест пулĕ.

Сире хăвăра кĕтетпĕр. Сывă пулăр. Александра Владимировнана пысăк салам. Ыррă-сывă юлатпăр.

**Сире юратакан Кириллова.**
**Çу уйăхĕн 2-мĕшĕ.**

## Н.В.НИКОЛЬСКИЙ

# Н.И.Ашмарин ĕçĕсем пирки

### Н.И.Ашмарин çак тĕпчев ĕçĕсене çырнă:

1. Чăваш чĕлхине тĕпчемелли материалсем. Пĕрремĕш пайĕ: Сасăсене вĕрентни /фонетика/. Иккĕмĕш пайĕ: Формăсене вĕрентни /морфологи/. Хусан. 1898 ç.
2. Чăваш синтаксисне тĕпченин опычĕсем. 1 пай. Хусан. 1903 ç.
3. Пăлхарсем тата чăвашсем. 1900 ç.
4. Чăваш халăх поэзийĕн очеркĕсем /Этнографи сборникĕнче/.
5. Чăваш чĕлхин словарĕ. I-II кăларăмсем.
6. Чăваш халăх юррисен пуххи.

Асăннă хайлавсемсĕр пуçне, Н.И.Ашмарин вак статьясемпе заметкăсем сахал мар пичетленĕ. Вĕсенчен ытларахăшĕ чăвашсен пурнăçĕ çинчен. Хăйĕн пур ĕçĕнче те Н.И.Ашмарин кивĕ материалсенче никĕсленине тĕпе хурать. Вăл хăй тĕрлĕ кĕпĕрнери чăвашсем хушшинче халăхăн сăмах вĕççĕн çӳрекен хайлавĕсене пуçтарнă. Тĕпчев меслечĕ, пĕтĕмĕшле илсен, хăйне евĕрлĕ: Н.И.Ашмарин хăйĕн ĕçĕсенче теорирен тĕслĕхсем патне мар, тĕслĕхсенчен пĕтĕмлетӳ патне пырать. Çакна йăлтах питĕ тĕплĕн çырса кăтартать. Васкамасть Н.И.Ашмарин, ăшталанмасть, анчах питĕ тĕплĕн шырать, сăнать, хăй сăнанисене тĕрĕслесе тухать. Çаксене пула Н.И.Ашмарин ĕçĕсем ăслăлăхпа туллин çыхăнса тăраççĕ. Çакна Раççейри Ăслăлăх академийĕ, Парижри тата Будапештри Ăслăлăх академийĕсем те йышăнаççĕ. Парижри Академи Н.И.Ашмарин словарьне питех те пысăка хурса хаклать, автора ăслăлăх шыравĕсене малалла туса пыма ыррă сунать.

Çӳлерех асăннă ĕçсене Н.И.Ашмарин хăй шучĕпе ĕçлесе, пурнăçĕн çав тери йывăр условийĕсенче çырса хатĕрленĕ. Автора никам та, нимĕнле пулăшу та паман, хавхалантарман. Çав вăхăтрах ытти ăсчахсем унашкал ĕçсемшĕн сахал мар премии илнĕ. Н.И.Ашмарина вара, хавхалантарас вырăнне, пĕр вăхăтра /1910 ç./ чутах хăйĕн пысăках мар хĕсмет ĕçĕнчен кăларса яман. Çапла тӳленĕ ăна. Камшăн пирĕн интересем хаклă, вĕсен Н.И.Ашмаринăн ăслăлăхри тава тивĕçлĕ ĕçĕсемшĕн халĕ те пулин хавхалантармалли май тупмалла. Нихçан та тăваймасан, халĕ туни лайăхрах!

Хăйĕн ĕçĕсемшĕн премии пани Н.И.Ашмарин хăйĕн йышлă çемйине усрас тĕлĕшпе кăштах пулăшĕччĕ, чăваш чĕлхине тарăнрах тĕпчес ĕçе малалла туса пыма вăй хушĕччĕ.

**1919 çул, ака уйăхĕн 11-мĕшĕ.**

### Çĕнĕ кĕнекесем

# *Аваллăх куç умне тухать*

М.Ф.Юрьев. "Пулхăр патшалăхĕн юлашки кунĕсем". Шупашкар. 1925 ç.

Çак кĕнекен авторĕ XIII ĕмĕр тĕлнелли летопиç, археологи материалĕсене лайăх, тĕплĕ пăхса тухнă. Истори çулне, пурне пĕрле илсен, тĕрĕс тунă. Çыннисем те, ĕçĕсем те XIII ĕмĕр йĕрĕнче çителĕклĕ таран тĕрĕс курăнаççĕ. Чĕрĕ, çирĕп характерлă, тĕнче çине пĕр тĕслĕ пăхакан çынсем сисĕнеççĕ. Вуланă чухне пулхăр-чăвашсем ытти халăхсемпе вăйлă культурăллă çынсен чĕлхипе калаçнă, ирĕклĕ халăх пулнă ĕмĕрсенче пурăнса курнă пекех туйăнать. Тепĕр енчен, ун чухне те чăвашсем хушшинче хăйсене анчах юратакан, хăйсен интересĕсемшĕн çеç тăрăшакан çынсем пулнă.

Историллĕ синкерлĕх тĕнчене тухни чăваш халăхĕшĕн хаяр ытла та питĕ вăхăтлă. Çак кĕнеке тухнине эпĕ хам, вăл чăваш халăхĕн ăс-хакăлĕ пуррине, чăваш халăхĕ лайăх вулама кăмăллă, чĕрене тивекен япала тума пултарнине тата тепĕр хут кăтартнăшăн саламлатăп.

Авторăн писатель-беллетрист таланчĕ, историлле пьесăсемпе интересленни пурах. Çавăнпа та автора малалла та ĕçлеме, хăйĕн пултарулăхне вăйлатма сĕнме юрать. Унăн талантне кĕтекен çутешсем нумай, акă вĕсем: X ĕмĕр, Асмас самани, XIII-XV ĕмĕрсенчи пулхăр кнеçĕсем Ылтăн урта ханĕсен вассалĕ пек тăни, XVII тата XVIII ĕмĕрсем – чăваш халăхĕ ирĕке тухасшăн кĕрешни /Çтенкка Разин, Пугачев/, чăвашсем тĕрлĕ хисеплĕ учрежденисенче ĕçлесе тертленни.

Малтанхи ĕçре йăнăшсем пулаççех. Çапла ку кĕнекере те çитменлĕхсем пур. Авторăн вырăссем 1229 çулта чей ĕçеççĕ, тĕрĕссипе, вĕсем ун чухне чей çинчен илтмен те; чăвашсен салтаксем пур, ку та пулман: ун чухне чăвашсен çар пулнă, салтак тенĕ сăмах XVIII ĕмĕр пуçламăшĕнче анчах тухать.

XIII ĕмĕрти чăвашсем, чăвашла калаçнă чухне, тăрсан-тăрсан, сăмахсене вырăсларах калаççĕ: мĕн пулчĕ санпа, теççĕ, мĕн пулчĕ сана, тес вырăнне.

Кун пек çитменлĕхсене пурне те, кĕнекене тепĕр хут кăларнă чухне, çăмăлах тӳрлетме пулать.

**Н.НИКОЛЬСКИЙ.**